ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ВЕРЕНӲ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 14 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи вĕренӳ çинчен" 2013 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 50 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; 2014, 3, 6, 11, 12 №-сем; 2015, 6, 10, 12 №-сем; 2017, 2, 9 №-сем; "Республика" хаçат, 2018, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, авăн уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ, утă уйăхĕн 15-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 17-мĕшĕ, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 28-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕ, 0000000000000244 №; "Республика" хаçат, 2022, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000758 №; "Республика" хаçат, 2023, чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2024, юпа уйăхĕн 16-мĕшĕ) 14 статйин 1^2-мĕш пайне çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 4-мĕш пункта çакăн пек çырса хурас:

"4) Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама хăйсен ирĕкĕпе пулăшасси çинчен калакан контракта тунă, ятарлă çар операцине хутшăнакан Раççей Федерацийĕн гражданĕсен;";

2) 5-мĕш пункта çакăн пек çырса хурас:

"5) Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсенче çар службине контрактпа иртекен, ятарлă çар операцине хутшăнакан, çавăн пекех Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçса тăракан çар чаçĕсенче çар службине контрактпа иртекен, ятарлă çар операцине хутшăнакан Раççей Федерацийĕн гражданĕсен;".

2 статья

Çак Саккун 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕ
98 №